



# ПУЯН ИСТОРИ

Теччĕри педучилище ҫинчен, Владимир Маяковский калашле, ҫырмалла тата ҫĕнĕрен ҫырмалла. Мĕншĕн тесен вăл темĕн чухлĕ ҫамрăк вĕрентсе кăларнă, педагог профессине панă. Унăн историйĕ пуян. 1917 ҫулта кунта учительсен семинарийĕ йĕркеленет. Тата икĕ ҫултан ун вырăнне педагогсен курсне уҫаҫҫĕ.

1921 ҫулта педагогсен техникумне туса хураҫҫĕ. Тăхăр ҫул иртсен ăна Тутарсен педагогика техникумĕ ят параҫҫĕ. 1937 ҫултанпа педагогика училищи шутланать.

Ячĕ улшăнсан та тупсăмĕ пĕр: заведени 85 ҫул ытла вĕрентекенсене хатĕрлет. Ҫак вăрăм тапхăрта кунтан 9090 специалист диплом илсе тухнă. Вĕсем пирĕн республикăра кăна мар, юнашарти кашни регионра ачасене пĕлӳ панă, параҫҫĕ, малашне те парĕҫ.

Паян коллективра пĕр РФ тава тивĕҫлĕ учителĕ, ТР тава тивĕҫлĕ учитель ятне илнисем улттăн ĕҫлеҫҫĕ. Коллектива Людмила Афанасьевна Лапаева ертсе пырать.



*Ильдар ГАБИТОВ сăнӳкерчĕкĕсенче: училище ҫурчĕ; Л.А.Лапаева; 301-мĕш ушкăнра вĕренекенсем — Гульнара Мердева (Ульяновскран), Евгения Крашининникова (Пăлхар), Ольга Якимова (Элкел); 305-мĕш ушкăн питĕ аван вĕренет.*

ЮБИЛЕЙ

# ХАЛĂХ ХИСЕПĔ — ЧИ ХАКЛИ

**Ĕҫе чунтан юратса, тăрăшса пурнăҫласан ҫеҫ пысăк ҫитĕнӳсем тума пулнине пурнăҫра нумай тĕслĕхсемпе ҫирĕплетсе пама пулать. Паллах, тĕрлĕ ҫын пур. Хăшĕсем ҫултаlăкра икĕ-виҫĕ хут ĕҫ вырăнне улăштараҫҫĕ, хăйсен кăмăлне килекеннине тупаймаҫҫĕ. Теприсем ҫамрăкранах пĕр-пĕр профессие суйласа илеҫҫĕ те тивĕҫлĕ канăва тухиччен хăйсен кăмăлне каякан ĕҫре тăрăшаҫҫĕ, ҫитĕнӳ хыҫҫăн ҫитĕнӳ тăваҫҫĕ. Ун пеккисене ĕҫтешĕсем те хисеплеҫҫĕ, ытти ҫынсем те сума сăваҫҫĕ. Любовь Григорьевна ПИМУКОВĂНА та ҫавнашкаллисен шутне кĕртмелле.**



— Пĕр ҫын та хăй тĕллĕн ҫеҫ ҫитĕнӳ тăваймасть. Пиртен кашниех пысăк е пĕчĕк коллективра ĕҫлет. Пĕрпĕринпе килĕштерсен, пĕр-пĕрне пулăшсан кăна усăллă ĕҫ пурнăҫланать, ҫынсем те професси картлашкипе ҫӳлтен-ҫӳле ҫĕкленеҫҫĕ, — тет вăл.

Любовь Григорьевна Лениногорскри музыкăлă педагогика училищинче 30 ҫула яхăн вăй хурать. Преподаватель-методист студентсене ритмикăна вĕрентет. Пурне те ялан пулăшма, паха сĕнӳсем пама тăрăшаканскере пĕрле ĕҫлекенсем те, студентсем те кăмăллаҫҫĕ. Ырă чун-чĕреллĕ чăваш хĕрарăмĕ тавра хуть хăҫан та ҫынсем. Ҫак кунсенче аллă ҫул тултарнăскере никам та ҫак ҫулта тесе каламĕ. Хăйĕн тĕп ĕҫĕсĕр пуҫне Любовь Григорьевна общественлăлла ĕҫсене те хастар хутшăнать.

1953 ҫулхи февраль пуҫламăшĕнче Лениногорск районĕнчи Ҫĕнĕ Шешкелте пурăнакан Григорий Семеновичпа Ульяна Силантьевна Кузьминсен ҫемйинче хĕр ҫуралнă. Пукане пек хитре пепкене ашшĕпе амăшĕ Люба ят хураҫҫĕ. Пĕчĕкрен харсăр ӳсет хĕрача, мĕн ачаран хăй тăвас тенине тума, пуҫланă ĕҫе вĕҫне ҫитерме юратнă вăл. Ялта вăтам шкул пулманран, 9-мĕш класа ялтан тăватă километрта вырнаҫнă, Самар облаҫне кĕрекен Туарман вĕренме ҫӳренĕ. Алла аттестат илсен ялти шкулта икĕ ҫул ачасемпе уроксем хыҫҫăн ĕҫлет ҫамрăк хĕр. Унтан Хусанти РНМЦ ҫумĕнчи бал ташшисен виҫĕ ҫуллăх курсĕнчен вĕренсе тухать. Любовь Григорьевнăна ĕҫлеме Лениногорск хулинчи музыкăлă педагогика училищине яраҫҫĕ. Ҫавăнтанпа, 1974 ҫултанпа, вăй хурать вăл кунта. Ĕҫлени хушăрах куҫăн мар майпа Хусанти Культура институтне (халĕ Культурăпа искусство университечĕ) пĕтерет. 1974 ҫултах хĕр пĕр ялта ҫуралса ӳснĕ Олег Степанович Пимукова качча тухса ҫемье ҫавăрать. Мăшăрĕпе икĕ хĕр ҫуратса ӳстереҫҫĕ вĕсем. Асли те, кĕҫĕнни те вăтам шкул хыҫҫăн амăшĕ ĕҫлекен училищĕре пĕлӳ илнĕ: Оксана — музыка уйрăмĕнче, Светлана — художество уйрăмĕнче. Ун хыҫҫăн иккĕшĕ те Хусанти Культурăпа искусство университетне вĕренме кĕнĕ (Светлана халĕ те вĕренет-ха). Ашшĕпе амăшĕ тăрăшуллă хĕрĕсемпе тивĕҫлипе мухтанма пултараҫҫĕ.

Каларăмăр ĕнтĕ, училищĕре студентсемпе ĕҫленисĕр пуҫне Любовь Григорьевна ытти общественлăлла ĕҫсене те хапăл туса хутшăнать. Вăл Лениногорскри Культура керменĕнче Геннадий Садовниковпа пĕрле чăвашсен «Шурă хурăн» ансамбльне ертсе пырать. Юрă-ташă ушкăнĕ республикăри «Чăваш шăпчăкĕ» конкурса та пĕрре мар хутшăннă. Кунсăр пуҫне Любовь Григорьевна училищĕре те чăваш ҫамрăкĕсенчен «Ҫунатлă ҫамрăклăх» ансамбль йĕркелесе янă. Вырăнти ЧНКЦ ĕҫĕсенчен те пăрăнмасть вăл.

— Хăш-пĕр чухне мăшăрăма килте те сайра куратăн. Ҫывăрма ҫеҫ килет темелле. Кăмăлне каять ăна ҫакнашкал ĕҫсене пурнăҫлама, халăхпа ĕҫлеме, — тет Олег Степанович.

Мăшăрĕ Любовь Григорьевнăна пултарнă таран яланах пулăшать. Темиҫе ҫул каялла вĕсем хулари хваттерне сутса Лениногорск ҫумĕнчи Тимяшево ялне куҫнă, пысăк ҫурт, хуралтăсем туса лартнă. Мĕн тăвăн, ял ҫыннине ялах туртать ĕнтĕ. Хăйсен хуҫалăхĕ те пĕчĕкех мар пулин те, тăван Ҫĕнĕ Шешкелне те манмаҫҫĕ Пимуковсем, кайкаласах тăраҫҫĕ. Унта вĕсене ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем яланах хапăл кĕтсе илеҫҫĕ.

Ҫапла лара-тăра пĕлмен, канăҫсăр чун-чĕреллĕ, пурне те ырă тума, пулăшма тăрăшакан ҫын вăл Любовь Григорьевна Пимукова. Ҫавăнпах ăна ыттисем те хисеплеҫҫĕ. Ҫакă вара, халăх сума суни, кашни ҫыншăнах пурнăҫра чи хаклă парне.

**Вера АЛЕКСАНДРОВА.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕ.**

# ЧĔРЕРЕ МАН — АЧАСЕМ

Светлана кĕҫĕр лайăх ҫывăраймарĕ, пĕр енчен тепĕр енне ҫаврăнса выртрĕ. Юнашар выртакан мăшăрĕ ыйхăран вăранса:

— Мĕн йăшăлтатса выртатăн? — терĕ те тепĕр енне ҫаврăнса выртса ăшă ыйха путрĕ.

Анчах та арăмĕ ҫывăрса каяймарĕ, мĕншĕн тесен ĕнер кăнтăрла иртсен пĕчĕк Саша салхуллăн ҫӳрерĕ, юташĕсемпе те кăмăллăн вылямарĕ.

— Мĕскер пулчĕ сана, Саша? — тесен вăл хыттăнах йĕрсе ячĕ. Ача макăрни заведующин чунне кайса тиврĕ. Майĕпен илĕртсе, теттесем парса кăмăлне ҫĕклесе ячĕ те температурине виҫсе пăхрĕ, вара садикре ĕҫлекенсенчен: « Ача кирлĕ мар апат ҫимен-и, юлташĕсем ăна кӳрентермен-и?» — тесе ыйтрĕ. Воспитательсем апла-каплине нимĕн те асăрхаманнине пĕлтерчĕҫ. Сашăн амăшĕ Марина ывăлне садике илме пырсан, ăна заведующи лайăх мар лару-тăру пирки каласа парĕ, Нина Васильевна тухтăр патне кайса килме сĕнчĕ. Ҫуллахи каҫсем кĕске. Шурăмпуҫ шуралма пуҫласассăн, куҫне хупмасăр ҫĕр каҫнăскер, Светлана хăвăрт тăрса ҫине халат тăхăнчĕ те Сашăсем патне васкарĕ. Марина Светланăна курсан:

— Сашăпа йĕркеллех, нимех те пулман, юлташĕсемпе килĕштереймен пулĕ, — терĕ.

Вара хĕрарăм каялла тавраннса килĕнчи ирхи ĕҫсене пурнăҫларĕ те садике васкарĕ. Амăшĕсем ачисене садике пĕрин хыҫҫăн тепри илсе пыма пуҫларĕҫ. Воспитательсем вĕсене йышăнса пӳлĕмсене кĕртсе ячĕҫ.

...Ҫакăн пек тытăнать Светлана Андреевнан ĕҫ кунĕ. Вунă класс пĕтерес умĕн вĕсене класс руководителĕ Галина Мухтаровна пухса ҫапла каланине вăл лайăх астăвать.

— Ачасем, эсир часах ку шкултан тухса тĕрлĕ еннелле саланса пĕтетĕр. Эпĕ сире хăвăрăн малалахи пурнăҫăра мĕнле йĕркелесси ҫинчен лайăх шутласа пăхма сĕнетĕп.

Кашни ача хăйĕн ĕмĕчĕ-шухăшĕпе паллаштарчĕ. Кам инженер, кам врач е строитель, хăшĕсем агроном е зоотехник пулма тĕллев лартнине пĕлтерчĕҫ.

— Эпĕ ачасене юрататăп, ҫавăнпа та Анат Кама хулинчи педучилищĕне кайма шутлатăп, — терĕ хăйĕн умĕнче тăракан учитель ҫине пăхса Светлана.

Юлташĕсем ун ҫине хăшĕ кăмăллăн, хăшĕ тĕлĕннĕ пек пăхса илчĕҫ.

— Пĕчĕк ачасемпе ĕҫлеме йывăр-ҫке, — тесе хучĕ хыҫалта ларакан хĕрача.

— Йывăрлăхсенчен хăрамалла мар пирĕн, — терĕ Светлана юлташĕ ҫине пăхса, — пирĕн вĕсемпе ĕҫлемелле, вĕрентмелле, пуласлăх вĕсенчен нумай килет, — тесе парта хушшине ларчĕ...

Хăй ĕмĕтленнĕ педучилищĕне лайăх палласемпе пĕтерсен ялти садикре воспитатель пулса ĕҫлеме тытăнчĕ. Чăнах та, малтанах ăна ҫăмăл пулмарĕ, хăш-пĕр чухне, ҫынсем ҫывăхра ҫук чух, макăрса та илетчĕ. Ҫапах та хĕр йывăрлăхсене ҫĕнтерчех. Вăхăт яланах малалла шăвать. Светлана хăй юратнă кĕрӳшĕ каччине — Юрие качча тухрĕ. Мăшăрĕ хăйне ăнланни те ăна ĕҫĕнче нумай пулăшрĕ. Ҫитменлĕхсем е йывăрлăхсем пулсан пĕр-пĕрне пулăшатчĕҫ. Вĕсен майĕпен ҫемье те ӳсме пуҫларĕ. Малтан хĕр ҫуралчĕ, ăна Алиса ят пачĕҫ. Иккĕмĕшĕ ывăл — Алеша ҫуралчĕ.

Светлана Владимировна ҫак садикре 17 ҫул ĕҫлет ĕнтĕ. Малтанхи 5 ҫулне воспитателĕ тăрăшрĕ, унтан заведующие лартрĕҫ. Ĕҫленĕ вăхăтра Светлана нумай ҫĕрте пулса пĕлĕвне ӳстерсех пычĕ. Ахальтен мар садикри пĕр пӳлĕмре грамотăсем ҫаканса тăнине курма пулать. 1998–1999 ҫулсенче садик районта пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, ТР вĕрентӳ министрĕ Ф.Ф.Харисов тивĕҫлĕ парнепе тата Хисеп грамотипе чысларĕ «Ласточка» ача садне.

— Пирĕн садике сахал мар ача ҫӳрет, кашни ҫулах 35–40 ачаран кая мар пухăнать. Вĕсемпе эпир тĕрлĕрен занятисем ирттеретпĕр, воспитательсем вăйăсем, юрăсем, ташăсем вĕрентеҫҫĕ. Хамăрăн тăван ялпа, хулапа, ҫĕршывпа паллаштараҫҫĕ, паллă ҫынсем ҫинчен каласа параҫҫĕ. Пирĕн воспитательсем ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе те нумай ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем те пире ăнланаҫҫĕ, пулăшаҫҫĕ, — каласа парать Светлана Владимировна. — Ялти хуҫасем те вăй ҫитнĕ таран пулăшу параҫҫĕ. Пысăк тав вĕсене. Пирĕн ачасем яланах телейлĕ пулчăр, ан чирлеччĕр, ӳссе ҫитсе хамăра, ҫĕршыва тивĕҫлĕ пулчăр. Эпĕ ачасене чунтан юрататăп, вĕсем яланах ман чĕрере, — йăл кулса сăмахне вĕҫлет хĕрарăм.

**Федор СИДУЛЛИН.**
**Нурлат районĕ, Хăмăшлă.**